Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Татса памалли ыйтусем çук мар





Майăн 16-мĕшĕнче йăлана кĕнĕ тăрăх районта пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Районти ĕç коллективĕсенче пулса çынсене хумхантаракан ыйтусем çине хуравлама района ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов, РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, РФ Юстици министерствин суд экспертизин республикăри лабораторийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов килчĕç.

Р.А. Кондратьева ертсе пыракан ушкăн Москакасси ял тăрăхĕнче пулчĕ, Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула, кунти пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисне, ача садне çитсе курчĕ. Ку ушкăнра çавăн пекех РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Е.М. Александрова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов пулчĕç.

Информаци кунĕн теми анлă. Ял çыннисемпе сӳтсе явма тăратнă ыйтусем хушшинче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин РФ Федераци Пухăвне янă Çыру, Чăваш Республикин 2008–2010 çулсенчи бюджет политикин тĕп енĕсем, тавралăха тирпей-илем кĕртессипе çине тăрса ĕçлесси.

Палăртнă предприятисемпе организацисенче пулнă май коллективсемпе тĕл пулнă чухне хăйсен сăмахĕсенче РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Е.М. Александрова РФ Президенчĕн Çырăвĕн тĕп тытăмĕсене туллин уçса пачĕç. Федераци Пухăвне янă Çыру Раççейĕн хăватлă держава тĕлĕшĕнчи строительствин стратегийĕ пулса тăрать. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ документра Раççей хăватне ӳстерессипе нумай вăхăтлăх программăна тата куллен татса памалли задачăсене конкретлă палăртнă.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсене йышăннăранпа çулталăк çурă кăна çитрĕ. Апла пулин те вĕсене пурнăçа кĕртессипе палăрăмлă ӳсĕмсем çук мар ĕнтĕ. Ку тĕлĕшпе «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») политика партийĕ пысăк вăй пулса тăрать. Сывлăха сыхлас, вĕрентӳ, çурт-йĕр тăвас тĕлĕшпе пысăк утăмсем тума май килни никамшăн та вăрттăнлăх мар.

Владислав Григорьевич тата çавна та уйрăммăн палăртрĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ РФ Федераци Пухăвне тата ЧР Президенчĕ республика Патшалăх Канашне янă Çырусем пĕр тĕллевлĕ. Епле пулсан та юлашки вăхăтра палăрнă ырă улшăнусене сыхласа хăварас пулать. Сыхласа хăварма майсем çук мар. Ахальтен мар ĕнтĕ «Чăваш Республикин 2020 çулчченхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕ çинчен» Саккун проектне пĕрремĕш вулавпа республика Патшалăх Канашĕн сессийĕнче йышăнчĕç, ăна пĕтĕм халăхпа сӳтсе яврĕç, сывăх вăхăтрах йышăнмалла.

Тĕл пулусем, паллă ĕнтĕ, ыйтусемпе сĕнӳсемсĕр мар. Информаци ушкăнĕ вырăнсенче пулнă май чылайăшĕ учительсене командировкăсенче пулнăшăн, коммуналлă услугăсемшĕн тӳлес, çуллен медосмотр тăрас, ялсенче техника спиртне сутакансене чарас, вырăнсенчи пасарсем, çынсене пенсисемпе тивĕçтерессинчи çĕнĕлĕхсем, ялсенче çӳпçап пухассине йĕркелесси пирки тата ытти ыйтусене хускатрĕç.

Палăртма кăмăллă, тĕл пулусене хутшăнакансем пурте кăмăллă юлчĕç. Чылайăшĕ вĕсенчен хăйне интереслентерекен ыйтупа тулли хурав илме пултарчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: тĕл пулу саманчĕсем.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Лава пĕрле пĕр еннелле туртмаллине ăнланаççĕ

Пĕрлехи информаци ушкăнĕн виççĕмĕш ушкăнĕ (унта “Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ” патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Л. П. Морозов тата район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи А.В. Петров пулчĕç) Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхра пулчĕ. Вĕсем складра вăй хуракансемпе, бухгалтери ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕç тата уя тухса механизаторсемпе курса калаçрĕç.

«Çăмăлах мар, паллах. Пурпĕрех малалла талпăнатпăр». Хуçалăх ертӳçин В.И. Семеновăн çак сăмахĕсем шанăç параççĕ.

Нумаях пулмасть шанчĕç Виталий Иосифовича йывăр лава туртма хуçалăх ĕçченĕсем. Лавĕ чăннипех те йывăр пулнине хуçалăхăн парăмĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Çакна халăх ăнланни савăнтарать. Никам та кунта паян ĕç укçи пар, тесе “чуна” илмест. Йывăрлăхран пĕрле тухмаллине пурте пĕлеççĕ.

–Паян пирĕн пурин те пĕр тĕллев – çур акине йĕркеллĕ ирттерсе ямалла, – теççĕ складран тырă тиекенсем.

Уйра акакан В.Н. Осипов механизаторăн, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕн те кăмăлĕ çĕкленӳллĕ. Çулсеренех вăл вырмара районта малтисен йышĕнче.

– Кăçал та маххă парас шухăш çук, – тет вăл. – Акса-лартса хăварса йĕркеллĕ çитĕнтересчĕ çеç ял хуçалăх культурисене.

Ертӳçĕпе хуçалăх ĕçченĕсем пĕр-пĕрне ăнланнине çурхи ĕççем те çирĕплетсе параççĕ. Паян асăннă хуçалăх палăртнă лаптăкăн 90 яхăн процентне çинче çурхи культурăсене акса хăварнă. Ку вăл районти чи пысăк кăтартусенчен пĕри. Çум курăксемпе кĕрешмелли, нӳрĕк тытмалли мероприятисене те вăхăтра ирттерчĕç.

Çур акине хутшăнакансене валли ĕç условийĕсене пăхса тухса çирĕплетнĕ. Хавхаланса ĕçлемелле пултăр тесе тунăскерсем вĕсем. Нормăна тултарсан çур акинче ĕçлесе илнĕ ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ. Дисциплинăна пăсса каталмасан. Çурхи ĕççене хутшăнакансене тӳлевсĕр апат çитереççĕ, вăл ахаль те йӳнĕ – 10 тенкĕ – пулсассăн та. Механизаторсем патне кăнтăр тата каçхи апата уя илсе тухаççĕ. Паян уйра 11 трактор ĕçлет, 4 сеялкăпа акаççĕ. Ирхи 8 сехетрен пуçласа каçхи 10 сехетчен чарăнмасть уйра техника шавĕ. Çур акине кунта тепĕр эрнере вĕçлес кăмăллă.

Татса памалли ыйтусем вара сахалах мар. Çынсене уйăх-уйăхĕпе ĕç укçи паманнипе хуçалăхра кадрсен ыйтăвĕ те çивĕч. Паян-ыран кунта выльăхсене уя кăлармалла. Çакна валли выльăхсене улăхра çӳретме тӳрех 14 çын кирлĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, механизаторсем çитмеççĕ. Ĕçлекенсем вара чăннипех тăрăшаççĕ.

–Ăнланатпăр ĕнтĕ ĕç укçин ыйтăвне паян тӳрех татса пама май çуккине, – терĕç тĕл пулура хуçалăх ĕçченĕсем. Налук органĕсен умĕнчи парăма татмаллине те лайăх ăнланаççĕ.

Ял çыннисем çавăн пекех пĕрлехи информаци кунĕнче чуна ыраттаракан ыйтусене те хускатрĕç. Выльăх ашне, уйрăмах сысна ашне, вырнаçтарма йывăрри, ял хуçалăхĕнче туса илнĕ продукцин хакĕ пĕчĕк пулни пăшăрхантарать вĕсене. Çавăн пекех ялти урамсенче асфальт çул кирлĕ ыйтăва хускатрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

“Радиохум – хаçат страницинче: ыйту пур. Хуравне пĕлесшĕнччĕ”

# “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ята камсене параççĕ?

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).**

“Заслуженный механизатор сельского хозяйства Чувашской АССР”;
“Заслуженный наставник молодежи Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник бытового обслуживания населения Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник высшей школы Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник жилищно-коммунального хозяйства Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник здравоохранения Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник здравоохранения Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник культуры Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник культуры Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник милиции Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник народного образования Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник образования Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник промышленности Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник промышленности Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник профессионально-технического образования Чувашской АССР” ;
“Заслуженный работник сельского хозяйства Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник сельского хозяйства Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник социальной защиты Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник социальной защиты населения Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник социального обеспечения Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник службы быта Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник сферы обслуживания населения Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник торговли Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник транспорта Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник транспорта Чувашской АССР”;
“Заслуженный работник физической культуры и спорта Чувашской Республики”;
“Заслуженный работник физической культуры и спорта Чувашской АССР”;
“Заслуженный рационализатор Чувашской Республики”;
“Заслуженный рационализатор Чувашской АССР”;
“Заслуженный изобретатель-рационализатор Чувашской АССР”;
“Заслуженный связист Чувашской Республики”;
“Заслуженный связист Чувашской АССР”;
“Заслуженный спасатель Чувашской Республики”;
“Заслуженный строитель Чувашской Республики”;
“Заслуженный строитель Чувашской АССР”;
“Заслуженный технолог Чувашской АССР”;
“Заслуженный учитель Чувашской Республики”;
“Заслуженный учитель Чувашской АССР”;
“Заслуженный учитель школы Чувашской АССР”;
“Заслуженный художник Чувашской Республики”;
“Заслуженный художник Чувашской АССР”;
“Заслуженный экономист Чувашской Республики”;
“Заслуженный экономист Чувашской АССР”;
“Заслуженный энергетик Чувашской Республики”;
“Заслуженный энергетик Чувашской АССР”;
“Заслуженный юрист Чувашской Республики”;
“Заслуженный юрист Чувашской АССР”.

**– “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ята илес ыйтупа ăçта тата хăçан каймалла?**

– Ку ыйтупа çӳлерех асăннă наградăсене илнисен социаллă хӳтлĕх пайне килмелле. Хăйсемпе пĕрле çакăнта каланă документсене илсе пымалла. Ку ĕçе халех пуçлама пултаратăр. Хапăл тусах кĕтетпĕр.

**– Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Налук ыйтăвĕсемпе

# Парăм никама та чыс тумасть

2007 çулхи пĕрремĕш кварталта Муркаш районĕ тăрăх бюджета тата бюджетлă мар фондсене 37260 пин тенкĕ тĕрлĕ тӳлев пуçтарăннă. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ку вăл 137,1 процент пулать. Çав шутран налук тӳлевĕсем федераллă бюджета 3699 пин тенкĕ (144,8 процент), республика бюджетне 8779 пин тенкĕ (139,2 процент), бюджетлă мар фондсене 15387 пин тенкĕ (112,6 процент) тата вырăнти бюджета 9395 пин тенкĕ (201,7 процент) пырса кĕнĕ.

Вырăнти бюджета пухăннă укçа-тенкĕн ытларах пайĕ вăл уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук пулса тăрать. Ку сумма 7549 пин тенкĕпе (80,4 процент) танлашрĕ. Пурлăхран илекен налук сумми 63 пин тенкĕ (0,7 процент), çĕр налукĕ 228 пин тенкĕ (2,4 процент), вмененнăй тупăшран илекен пĕрлĕхлĕ налук 1390 пин тенкĕ (14,8 процент) пулчĕç.

Налук тӳлевĕсем енĕпе парăмсем 721 пин тенкĕлĕх ӳсрĕç, 2270 пин тенкĕпе танлашрĕç. Вăл шутран вырăнти налуксем енĕпе парăмсем 54 пин тенкĕ пысăкрах, 419 пин тенкĕпе танлашаççĕ.

Паянхи вăхăтра налук тӳлевĕсем, пĕрлехи социаллă налук тата обязательнăй пенси страхованийĕн страховани взносĕсем енĕпе пысăк парăмлисем шутне ООО «Доц», ЗАО «Трест №3 Спецмонтажгаз», ЗАО «Компания «Хмель» Муркашри филиалĕ, МУП «Моргаушагропромснаб», МУП «Кафе «Пельмени», ООО «Агроном», ООО «Дубрава», ООО «МилГрад», ООО «Золотая пирамида», ОАО «Моргаушский молочный завод», ЗАО МСО «Моргаушская», МУП ЖКХ «Моргаушское», «Динамо», К. Иванов яч. хис., «Чемеево», Е. Андреев яч. хис., Чапаев яч. хис., Ленин яч. хис., «Свобода» хуçалăхсем, «Рассвет», Нива», «Лидер», «Хлебороб» агрофирмăсем, ООО «МилТрейд», Мăн Хураçка шкулĕ, Э.И. Баранов, А.Н. Васильев, Ю.А. Железнова, Б.М. Кириллов, В.В. Кириллов, В.А. Никоноров, Т.П. Осколова, Ю.И. Тихонов кĕреççĕ.

Инспекци çавна уйрăмах палăртать. Асăннă тӳлевсем социаллă пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем тĕллевлĕ шутланаççĕ. Парăмсене вăхăтра парса татманни çынсене пенсисемпе тивĕçтерессипе, социаллă тата медицина пулăшăвĕ парассипе йывăрлăхсем кăларса тăратать. Çавăнпа та налук тӳлевĕсен парăмĕсене пурин те çывăх вăхăтрах парса татасчĕ, малашне вара вĕсене вăхăтра тӳлесе тăрасчĕ.

**Раççей налуксемпе тӳлевсен министерствин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ.**

Район прокуратуринче

# Ĕç укçине вăхăтра тӳлемелле

Шел пулин те, ĕç укçине вăхăтра тӳлесе тăрасси районти хăш-пĕр предприятисемпе организацисенче паянхи кун çивĕч ыйтусен шутне кĕрет. РФ Ĕç кодексĕн 136 статйипе килĕшӳллĕн ĕç укçине уйăхра икĕ хутран кая мар тӳлемелле. Кунсăр пуçне кирек епле ĕçшĕн те тӳлеме тивĕççине РФ Конституцийĕн 37 статйинче те çирĕплетнĕ. Ĕç укçине тӳлеменни е вăхăтра тӳлеменни çынна вăйпа ĕçлеттерни шутне кĕрет.

Акă, район прокуратурин тĕрĕслев материалĕсем тăрăх ĕçлекенсем умĕнче ĕç укçи тӳлессипе чи пысăк парăмлисем шутĕнче Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх шутланать. Çавна май район прокурорĕ çынсене шутласа панă, анчах та тӳлесе татман ĕç укçине шыраса илме суда иск тăратрĕ.

Прокуратура ĕçĕ-хĕлĕ вырăнсенче законодательствăна епле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрассипе çыхăннă. Хăйсен ĕçри должноç вырăнĕпе усă курса ĕç укçине вăхăтра тӳлеменнисене вара административлă майпа, тепĕр чухне уголовнăй майпа та айăплама пăхнă. Ĕç законодательствине тата ĕç сыхлавĕн требованийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси малашне те пирĕн тĕп тивĕçсенчен пĕри пулĕ.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Тĕслĕх библиотекăра

# “Манра мĕн пурришĕн кĕнекесене эп тивĕç”

Чăваш Наци библиотеки çамрăк библиотекарьсем хушшинче “За новый социальный статус и имидж профессии” ятпа иккĕмĕш республика конкурсне ирттерет. Çак конкурса хутшăннă май Катькасри тĕслĕх библиотека вулакансемпе “Манра мĕн пурришĕн кĕнекесене эп тивĕç” ятпа кĕнеке уявне ирттерчĕ. Мероприятие М. Горький кĕнеке пирки каланă сăмахсене тĕпе хурса хатĕрлерĕмĕр. Халăх кĕнеке пирки нумай ăслă шухăш каланă. Уява пухăннисене вулакансем кĕнеке пирки каланă ваттисен сăмахĕсемпе, вĕрентĕвĕсемпе паллаштарчĕç. Ачасем кĕнеке çинчен, вĕсене мĕнле упрамалли çинчен сăвăсем каларĕç. “Кĕнеке” ятлă пĕчĕк сценкăра ача хăвăртрах пысăкланасшăн, кĕнеке вуласшăн. Унăн ырă шухăшне мухтамалла çеç. Пĕчĕк ача вулакансемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Вулама вĕренсен вăл та чăн-чăн кĕнеке тусĕ пуласса пĕр иккĕленмесĕрех шанмалла.

Кĕнеке çыннăн пурнăçĕнче чăнах та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине “Çамрăка хальхи саманара пăхса ӳстерессии е кĕнеке усси çинчен” юмах çирĕплетсе парать. Старик çĕр çинче ĕмĕрĕпе ĕçлесе пурăнать пулин те, çĕннине пĕлни пăсмасть, тет. Библиотекăран çарăк пăхса ӳстермелли кĕнеке илсе килнĕ. Кĕркунне çарăк кавăн пек çитĕнсе ларнă. “Кӳршĕсен, ав, кишĕр пек кăна. Калатăп çав, кĕнеке вуласа пăхнин усси пурах”, – тет старик карчăкне.

Библиотекăна юлашки вăхăтра чăваш писателĕсен çĕнĕ те илемлĕ кĕнекисем нумай килчĕç. Библиотекарь вулакансене “Чăваш писателĕсем – ачасен тусĕсем” кĕнеке выставкипе паллаштарчĕ.

Ачасене библиотекарь кĕнекесене мĕнле упрамалли çинчен пичетленĕ “кĕнеке” парнелерĕ, аслăрах çулхи ачасем валли кĕнекесем çинчен тĕрлĕ вăхăтра паллă писательсем, ăсчахсем каланă шухăшсенчен, каларăшсенчен “Ăсчахсем сĕнеççĕ” ятлă буклет хатĕрлерĕ.

**А. УГАРОВА,**
**Катькасри тĕслĕх библиотека ертӳçи.**